Октябрĕн 10-мĕшĕ – Психика тĕлĕшĕнчи сывлăх кунĕ

Ача сывлăхĕ – чи кирли

Октябрĕн 10-мĕшĕ Психика тĕлĕшĕнчи сывлăх кунĕ пулнипе паллă. Эпир тăтăшах ӳт-пӳ сывлăхĕ çинчен калаçатпăр, анчах та психологи ыйтăвĕ аяккарах юлать. Çакăн пирки Чăваш Республикин Президенчĕ Н.В. Федоров Чăваш Республикин Патшалăх Канашне янă çырăвĕнче те асăннă. "Паллах, ӳт-пӳ сывлăхĕ – калама çук пысăк пĕлтерĕшлĕ, мĕншĕн тесен унсăрăн наци хăтăлса юласси, демографи лару-тăрăвне тӳрлетесси пирки каласма май та çук. Анчах хальтерех кăна каланине тĕпе хурса хамăрăн социаллă чир, çитĕннисенчен ачасене куçса вĕсен ăс-тăнне амантса улăштаракан ерекен чир çинчен сăмахланă май тепĕр хут палăртса хăварасшăн: ӳт-пӳ экологийĕ пĕлтерĕшлĕ, анчах чун экологийĕ унран та пĕлтерĕшлĕрех. Ача ӳт-пӳ тĕлĕшĕнчен кăна мар, моральпе этика енчен те сывă, ăслă-тăнлă, пысăк интеллектлă пулма тивĕç".

Вĕрентӳ ĕçĕнчи психологи службин тĕп ĕçĕ-хĕлĕ ачапăчан психологиллĕ çирĕп сывлăхĕшĕн тăрăшасси пулса тăрать. Кĕçĕн ăрăвăн психологи тĕлĕшĕнчи сывлăхĕ чылай пулăмсенчен килет. Чи малтанах, çемьери лару-тăру, ача аталанăвĕ, сывлăхĕ çине пысăк витĕм кӳнине палăртмалла. Эпир пурте пĕлетпĕр ĕнтĕ, çитĕнекен ăру питĕ сисĕмлĕ, хăвăрт туйăмлă тата унăн ăсхакăлĕ çав тери хăвăрт аманать. Ăна тăтăшах ашшĕ-амăшĕ юратнипе юратманни кăсăклантарать. Çак ыйтăва вăл сăмах вĕççĕн е кăмăл-туйăм урлă палăртать. Ачан кăмăл-туйăмне хавхалантарма вара нумаях та кирлĕ мар: ăна куçран пăхмалла, хăвăн çумарах çупăрламалла, кирлĕ пулсан, хумхантаракан ыйтусене пĕрле сӳтсе явмалла. Эпĕ ашшĕ-амăшне çакăн пек йыхравлатăп та пачах хирĕçле хурав илтетĕп.

Пирĕн, чăвашсен, урăхларах шухăш-кăмăл е хамăр юратăва ачасем умĕнче палăртмалла марри пуç пулса тăрать. Анчах психологсем çакна çирĕппĕнех хирĕçлеççĕ. Ĕнчен те ачана юрату парнелетĕн пулсан, каялла юрату таврăнать, нимĕн те параймасан вара кĕтмелли те нимĕн те çук.

Ачан психологийĕ çине тарăхупа çилленӳ те пысăк витĕм кӳреççĕ. Пирĕн тĕллев вара çак капланăва вăхăтра сирме тата лăплантарма вĕрентесси пулса тăрать. Чăваш халăхĕн мĕн ĕмĕртен: "Чăтмалла, аван мар, юрамасть..." – тенисем пуç пулса тăраççĕ. Капланса çитнĕ тарăху пирĕн ăшра пур-пĕрех хăйĕн ĕçнех тăвать. Чăваш Енти суицидсен пысăк хисепĕ те çак ăнланусемпех çыхăнман-ши?

Ача сывлăхĕнче, аталанăвĕнче шкул питĕ пысăк вырăн йышăнать. Шкулăн тĕп тĕллевĕ вара ача-пăчана кăткăс пурнăç çулĕ çине тĕрĕс куçпа пăхма вĕрентесси пулса тăрать. Çавăн пекех хăйсен тата ытти çынсен сывлăхĕсене упрама вĕрентес ĕçре те явапли шкул шутланать. Пирĕн вĕрентекенсем хушшинче вара кĕçĕн ăрава ăнланакансем питĕ нумайăн вăй хураççĕ тесе шанас килет.

Иртнĕ вĕренӳ çулĕнче эпир шкулсенчи нервпа психика тĕлĕшĕнчи лару-тăрăва тĕпчерĕмĕр. Пысăкрах шкулсенче вара ачасен канăçсăрлăхĕ, вăйсăрлăхĕ, пусăрăнчăк шухăш-кăмăлĕ ытларах сисĕнчĕ. Палăртса хăвармалла, çакăн йышши енсем вĕренӳре аван ĕлкĕрсе пыракансен те, шкулăн обществăлла пурнăçне активлă хутшăнакансен те палăрчĕ. Çакă пысăк шкулсен кăткăс ĕçĕ-хĕлĕпе çыхăннă. Ача аталанăвĕ тĕрлĕ тапхăртан, çулйĕртен тăрать. Апла пулсан вĕрентекенĕн çавна аван пĕлсе усă курмалла. Çавăн чухне тин пур енлĕ сывă ăру ӳстерме пултаратпăр.

Паянхи кун психолог профессийĕ питĕ вырăнлă та кирлĕ, шкулта вара пушшех те. Вăл шкулти психологи тĕлĕшĕнчи лару-тăрăва йĕркелекен пулса тăрать. Кăçалхи вĕренӳ çулĕнче те ав шкулсенче психологи эрнисем иртрĕç. Унта калаçу ытларах пиллĕкмĕш класра вĕренекенсем пирки пулчĕ. Çакă вара ăнсăртран мар, мĕншĕн тесен çак вăхăт вĕренекен, вĕрентекен, ашшĕ-амăш пурнăçĕнче кăткăс тапхăр шутланать.

Çавăн пекех психика тĕлĕшĕнчи сывлăх кунне халаллана ытти калаçусемпе мероприятисем те пулса иртрĕç. Енчен те сире пăшăрхантаракан ыйтусем, самантсем пулчĕç пулсан, пĕр тăхтаса тăмасăр пирĕн центра пырăр. Эпир вара май пур таран тĕрлĕ канашсемпе пулăшма тăрăшăпăр. Сăмахран, "Çамрăк çемье клубĕ" чылайăшĕшĕн вырăнлă пуласса шанас килет.

Эпĕ вара Психика тĕлĕшĕнчи сывлăх кунĕ ячĕпе педагог-психологсене, вĕренекенсене, вĕрентекенсене, ашшĕ-амăшне çирĕп сывлăх, телей сунатăп.

Л. ВЕРХОВЦЕВА,
вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн диагностика центрĕн директорĕ.

Сăн ӳкерчĕкре: районти педагог-психологсен пĕр ушкăнĕ.

Мĕнле сывлатăн, тăван ялăм

Сăмахăм ял старости пирки

Вырăс поэчĕсем вырăс хĕрарăмне çӳле çĕклесе нумай-нумай илемлĕ хайлавсем çырнă. Чăваш хĕрарăмĕ çинчен те сахал мар çырма пулать. Унăн сăпайлăхĕ, илемлĕхĕ, ĕçченлĕхĕ, тараватлăхĕ пирки вара кам кăна каласа-çырса пĕтерĕ-ши? Ялта пурăнакан çын çинчен вара пушшех те.

«Пӳртĕн 4 кĕтесĕ никĕс çинче тытăнса тăрать пулсан, пĕр кĕтесне хĕрарăм тытса тăрать»,– теççĕ чăвашсем. Халăхи вăхăтра вара хĕрарăмăн пурнăçри пĕлтерĕшĕ татах та пысăкрах: хĕрарăм кил-çурт тыткăчи, амăшĕ те, ертӳçĕ те, депутат та, староста та.

Сăмахăм вара манăн Москакасси ял тăрăхне кĕрекен Ситуккасси ялĕн старости Елена Иувентиевна Петрова пирки. Çак илемлĕ те кăмăллă хĕрарăмран эпĕ ниепле те тĕлĕнме пăрахаймастăп. Акă киле ĕçрен таврăннă-таврăнман (хăй вăл 12-мĕш номерлĕ автозаправка станцийĕнче заправщица пулса тăрăшать) кил картишĕ тулли выльăх-чĕрлĕхĕпе чăххичĕппине тăрантарма та ĕлкĕрнĕ ĕнтĕ. Хушма хуçалăхри выльăх-чĕрлĕхĕ вара чăннипех йышлă. Сыснасем миçе пуç усратăр тесе ыйтсан, 60 пуçран иртсен шутлама пăрахнă тесе хурать. Анчах та вĕсене пурне те пăхса пурăнас, тăрантарас тата тасатас пулать вĕт-ха. Калама кăна çăмăл.

Паллă ĕнтĕ, çак ĕçе Елена пĕччен тытăнман. Яланах çумра юратнă мăшăрĕ Александр пур, маттур ывăлĕ Дима та кил таврашĕнчи ĕçсенчен ютшăнмасть, ашшĕ-амăшне пулăшма тăрăшать. Ытларах ĕçсене пĕрле тума тăрăшаççĕ.

Ытла нумаях пулмасть Ситуккассисем хăйсен ял уявне паллă турĕç. Хатĕрленӳ ĕçĕсене пĕтĕмпех вара Елена Иувентиевна йĕркелесе туса пынă. Укçа-тенкĕ тĕлĕшпе пулăшакан спонсорсене тупнă, парнисене те туяннă, концерт йĕркелесси пирки артистсемпе каласса сăмах татнă.

Ситуккасси ялне асфальт çул сарасси те вăл хутшăнмасăрах пулман ĕнтĕ. Халĕ вара старостăна яла шыв кĕртесси шухăшлаттарать. Москакасси ял тăрăхĕн пуçлăхĕпе М.М. Пушкинпа каласса-килĕштерсе çак çăмăл мар ыйтăва татса пама тĕрлĕрен майсем шыраççĕ.

Çапла, ялсенче Елена пек активлă, мал туртăмлă, пуçаруллă, çынсемшĕн тăрăшакан ĕçченсем ытларах кирлĕ, вара пирĕн шухăш-ĕмĕтсем, мĕн палăртнисем те хăвăртрах пурнăçа кĕрĕç, пурнăç та илемлĕрех те илĕртӳллĕрех пулĕ ун чухне.

Р. СИБЯКОВА,
Москакасси ял библиотекин библиотекарĕ.

Сăн ӳкерчĕкре: Ситуккасси ял старости Е.И. Петрова.

Паллашăр, çĕнĕ ярăм: "Радиохум – хаçат страницинче. Çыннисем маттур пулнăран районăмăр пуян"

"Çак шăпанах суйланă пулăттăм"

Кашни çын хăйĕн вырăнĕнче тӳрĕ чунпа ĕçлесен, çитĕнӳ пуласса пирĕнтен кашниех лайăх пĕлет. Пур чухне те тава тивĕçлĕ маттур çынсем пирки пĕлсех те пĕтерейместпĕр пулĕ. Кашни çыннăн кун-çулĕ вара – уйрăм истори. Тĕпчеве тивĕçлĕ вăл тата ыттисене каласа памалла ыттисемшĕн тĕслĕх пулса тăракансем çинчен. Шăпах çак тĕллевпе уçатпăр та паянхи çĕнĕ ярăма. Ăна вара çăмăл алăран – паян 70 çул тултаракан Ф. В. Ермолаеваран пуçлăпăр. Тивĕçлĕ вăл çакна. Хăйĕн ĕмĕр тăршшĕнче сахал мар çынна ыр тунă вăл.

Кашни çынах çĕр çине ырă ĕç тума çуралать, теççĕ. Муркашра пурăнакан Ф. В. Ермолаеван пĕтĕм пурнăçĕ вара çынна ырă тунипе çыхăннă.

– Пирĕн тăрăхри сывлăх сыхлавĕн министрĕ вырăннехчĕ вăл пирĕншĕн, – тесе аса илеççĕ ăна паян Шатракасси тăрăхĕнче пурăнакансем.

Ара, мĕн каласси пур. 10 класс пĕтернĕ хыççăн Мăн Хураçкари Анна Дмитриевнапа Василий Павлович Ижутовсен хĕрĕ 1957 çулта Канашри медучилищĕне вĕренме кĕчĕ. Унтан вĕренсе тухнă хыççăн Шатракассинчи фельдшерпа акушер пунктĕнче 9 çул та 4 уйăх фельдшерта ĕçленĕ май кама кăна вилĕмрен çăлмарĕ пуль, кама кăна вăхăтра пулăшу памарĕ пулĕ. Никама та халь ман вăхăт çукха, темен. Ун чухне çулталăка çитичченхи ачасем кăна 40-46 пулнă. Кашнин патне кашни кун çитмелле. Прививкăсене вăхăтра тумалла. Ун чух та хальхи пекех ачасен сывлăхĕшĕн çирĕп тăратчĕç. Çулталăка çитмен кашни ачашăн яваплăх пуç çинчехчĕ.

Астăвать-ха Феня Васильевна пĕри хĕр пуççăн ача çуратнă тĕслĕхе. Лешĕн инкĕшĕ килсе пĕлтерчĕ кун пирки. Пулăшу пама чупнă медсестрана пулас ача амăшĕ çапла çавăрттарса хучĕ:

– Туртса кăлар та вĕлер. Хăтăрса та, лăплантарса та илчĕ Феня Васильевна, хĕрарăма больницăна леçсе хăварчĕ.

– Куçран ан вĕçертĕр, - асăрхаттарчĕ вăл хăйсен ĕçтешĕсене. Паян вара çав хĕрарăмăн 8 ача иккен.

– Эпĕ ун пек каламан пуль ĕнтĕ, – тет хĕрарăм çав айван пулнă вăхăта аса илсе.

Вăхăтра панă пулăшу, айккинчен каланă сăмах йăнăш утăмран сыхласа хăварать иккен. Ачасемшĕн амăшĕ вырăнĕнчеччĕ, аслисемшĕн юлташчĕ ялти фельдшер Ф.В. Ермолаева.

Сахал çӳренĕ-и тата килсем тăрăх? Кашни килте мунча, туалет пур-и? Санэпидстанци пысăк требованисем лартатчĕ çав. Вăл вăхăтра тата куç чирĕсем пуласран хытах асăрханă. Килсене тухсах тĕрĕсленĕ куça.

Ку çеç-и? Кашни кун уя тухнă хĕрӳ ĕç çинче: камăн ури, камăн пуç ыратать. Вырăна тухса пулăшу панă вăхăтра медпункта пулăшу ыйтма килекенсем те пулаççĕ. Ирĕксĕрех санитаркăн та медсестра вырăнне пулма тиветчĕ кун пек чух.

Хальхи пек "Васкавлă пулăшу" машинисем пулнă пулсан, татахчĕ-ха. Çук-çке. Лашапа çӳренĕ ун чух района. Чи кирли – чирлисене вăхăтра çитермелле района. Мĕнле майпа? Кун пирки никам та, нимĕн те каламан.

– Йывăр çын хĕрарăмсене района леçме тăратăн та, лаши пур чух çуни пулмастчĕ. Çуни пур чух лашине шыраса хăшкăлаттăнччĕ, – аса илет паян вăл вăхăтсене Феня Васильевна. – Çак лашапа çуна медпункта валли тесе каламалла пулнă та-ха вырăнти ертӳçĕсен. Килтех ача çуратнă тĕслĕхсем сахал пулнă-и ун чухне.

– Ача çурални çинчен калакан свидетельствăсене те хамăрах параттăмăр, - тет паян 70 çул тултаракан медсестра. Юрать-ха, хăйне аслă ачипе йывăр çын пулнă чух мăшăрĕ Гурий Петрович пĕчĕкрех те пулин çуна тупса килчĕ, пурпĕрех ĕлкĕреймерĕç района çитме, хĕрне шартлама сивĕре Каршлăх варринче çуратрĕ Феня Васильевна. Юрать, ăшă утиял чиксе тухнă.

Е тата çуна çулĕ пĕтнĕ, урапа вăхăчĕ çитмен вăхăтсенче мĕнле кансĕрччĕ. Хĕрачи хыт чирленипе ӳпкине лексен, мĕн тери хыпăнчĕ вăл. Ачапа мар, çуран та çитейместĕн вăл вăхăтра Сĕнтĕре.

– Килте хамах сыватрăм ачана, – чун ыратнă вăхăт халь пулнă пек хаш! Сывлать хăй ĕмĕрне сывлăх хуралĕнче ирттернĕ медсестра.

Хăйĕн пирки шутлама та вăхăт пулман çав. Астăватьха тата пĕр ачана операци тума район центрне леçме кайнине. Хĕл варринче çилтăман пуçларĕ, çуна çула çухатрĕ. Тав Турра, лаши ăслăскер пулчĕ, кил тĕлнех илсе çитерчĕ. Шăнса хытнă медсестрана хваттер хуçи хăй сиплерĕ халăх медицинипе.

Мĕнле йывăр пулсан та, юратнă ĕçре чун канăçлăхне тупатчĕ вăл.

– Хам ирĕкпе пулнă пулсан, çавăнтах ĕçлеттĕмччĕ, - тет Феня Васильевна çамрăклăхне куç умне кăларса. Мăшăрне, районти халăх сучĕн судйине Г.П. Ермолаева район центрне куçарсан, çемье Муркаша куçса килет. Районти тĕп больницăн тĕп медсестринче ĕçлеме пуçлать (мĕн тивĕçлĕ канăва тухичченех ĕçлет çак ĕçре) Феня Васильевна. Ун чухнехи вăхăта аса илсен те чĕри туртса касса каять.

– Ĕç хыççăн хваттер алăкне уçма чун шикленетчĕ. Кунĕпех пĕччен хупса хăварнă ачасем мĕн ĕçлеççĕ-ши? Чĕрĕ-сывă-ши? Çак шухăш пĕр кун та канăç паман ăна. Çакна валли çăлтавĕ те пулнах çав. Пĕррехинче киле аслисемсĕр юлнă 2 çулхи ывăлĕ Лева 2-мĕш хут чӳречинчен урама тухасшăн пулнине, юрать-ха, иртсе пыракан следователь курнă. Тӳрех ачан ашшĕ патне суда пĕлтерет. Хăйĕнчен ик çул аслă аппăшне итлесшĕн пулман-ши пĕчĕкскер. Ашшĕпе палламан пиччĕш асăрханса майлаштарса каласса ачана инкекрен çăлаççĕ.

Е тата пĕррехинче ĕç хыççăн пӳрте кĕрсен чĕри çурăлсах каятчĕ амăшĕн. Ниçта пĕр чун та курăнмасть.

– Ачасем, Галя, Лева, ăçта эсир? – алăри сумкине пăрахса ыткăнчĕ хĕрарăм пӳлĕмрен пӳлĕме. Кухньăра газ çунать.

– Анне, чуть вилеттĕмĕрччĕ вĕт, - ĕсĕклесе йĕрсе тухрĕç лешсем пĕрин хыççăн тепри кравать айĕнчен.

Хăйсем патĕнче пурăнакан хĕре Феня Васильевна ачисене сĕт ăшăтса пама хушса хăварнă. Лешĕ сĕтне ăшăтса панă, анчах газне сӳнтерме маннă. Мăнтарăн пĕчĕк хĕрача мĕнле тăрăшсан та газ плитине сӳнтереймен, сехре хăпнипе инкекрен çăлăнас тесе шăллĕпе иккĕшĕ те кравать айне тарса пытаннă. Кун пек тĕслĕхсем татах та илсе кăтартма пулать. Ĕмĕрĕпех çынна ырă тунăран пулĕ ачисене те хăйсем ĕçре чухне инкек-синкекрен сыхласа пычĕ кун-çулĕ.

Ĕç кĕнекинче Ф.В. Ермолаеван икĕ йĕрке çеç çырнă: Шатракассинчи фельдшерпа акушер пункчĕн фельдшерĕ тата Муркашри тĕп больницăн тĕп медсестри. Унăн чун ăшшипе ăшпиллĕхне çĕршывăмăр та тивĕçлипех хакларĕ. 1977 çулта "СССР тава тивĕçлĕ сывлăха сыхлас ĕçченĕ" ята параççĕ ăна. Шăп тепĕр 10 çултан "Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ сывлăха сыхлас ĕçченĕ" хисеплĕ ята тивĕçет. 1984 çулта "Ĕç ветеранĕ" пулса тăрать. Ĕмĕр тăршшĕпе миçе хутчен юн паман пулĕ вăл, ахальтен тивĕçмен ĕнтĕ тата "СССР хисеплĕ донорĕ" ята.

Паян вара Феня Васильевна шăп та лăп 70 çул тултарать. Пĕтĕм кун-çул куç умне тухать çĕнĕрен. Ывăлĕпе хĕрĕшĕн халь вĕсем пĕчĕк чухнехи пек ăшĕ çунмасть ĕнтĕ. Хĕрĕ Г.Г. Федотова амăшĕн çулне суйларĕ. Шупашкарти И.Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш Патшалăх университечĕн медицина факультетне пĕтерчĕ. Паян районти тĕп больницăн тĕп врачĕн çумĕ. Ывăлĕ вара Л.Г. Ермолаев ашшĕн çулне килĕштерчĕ. Воронежри юридици институтне пĕтерчĕ. Халĕ ЧР Аслă Сучĕн судйи. Ывăлĕпе хĕрĕ, 4 мăнукĕ – Феня Васильевнан пурнăçĕн паянхи çути.

Аннеçĕм, тавах сана пире çын тунăшăн, чун ăшшине пире парнеленĕшĕн. Эпир санпа мухтанатпăр, сан умăнта çĕре çити пуç таятпăр, - теççĕ амăшне юбилей ячĕпе саламласа, çирĕп сывлăхлă вăрăм кун-çул сунса. Ачисемпе мăнукĕсен юратăвĕ çумне вăл ыр тунă çынсем ыр суннине хушатăн та çапла пĕтĕмлетӳ тумалли çеç юлать. Ырри ырăпах таврăнать иккен, чăнах та. Ыр кун-çул сире, Феня Васильевна. Район аталанăвĕнче сирĕн тӳпе те çителĕклех.

Л. ПАВЛОВА.